Килти хушма хуçалăх

Тиша кăçал та çĕнтерӳпе таврăнчĕ

Тĕрлĕ енпе интересленекенсем пур пирĕн хушăра. Пĕри пулла, тепри сунара çӳреме кăмăллать, тепри тата кунĕпе тенĕ пекех пахчаран тухма пĕлмест, унта тĕрлĕрен улма-çырла пăхса çитĕнтерет. Хур пăхса çитĕнтерекенсем те çук мар. «Тупнă тĕлĕнмелли. Мĕнех, ялта хур пăхса ӳстерекен сахал-и?»– теме пăхĕç хăшĕсем. Апла мар иккен.

Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан Радислав Иосифович Потапов вара ахаль хурсене мар, «çапăçакан» хурсене ĕрчетессипе ĕçлет. Тĕрĕссипе унăн хуçалăхĕнче «холмогорски», «линдовски» ăратлă хурсем те пур. Анчах та ытларах тимлĕх вăл «тульски» ăратлисем çине уйăрать. Шăпах ĕнтĕ вĕсем ятарлă турнирсенче «çапăçма» юрăхлă.

– Хур аçисем пĕвере пĕрпĕринпе хирĕçнине ача чухнех сăнама хăнăхнă. Аслисем асăрхаман чухне вара вĕсене пĕр-пĕринпе ятарласах çапăçтараттăмăр. Кайран та çакăнпа интересленесси пĕтмерĕ. Иртнĕ çулсенче вара Чулхула облаçĕнчи Бор районĕнче хур аçисен çапăçăвĕ енĕпе ятарлă турнирсем ирттернине пĕлсен, унта пĕр хут кăна мар кайса килтĕм, хур аçин чĕппине туянтăм, ăна турнира хатĕрлеме тытăнтăм,– каласа парать Радислав Иосифович.

Паллах, пĕлекенсем-паллакансем пулăшмасăр пулман. Хур чĕппине тупма, ăна çапăçусене хатĕрлеме ăна Борта пурăнакан пĕлĕшĕ Николай Конарев та сахал мар пулăшнă.

Р.И. Потаповăн (тĕрĕсрех каласан, унăн «воспитанникĕн» Тиша хур аçин) иртнĕ çулхи çитĕнĕвĕ пирки вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ. Ун чухне турнира хутшăнса Шаптак каччи пĕрремĕш хутĕнчех Чулхуларан ылтăн медальпе таврăннăччĕ. Кăçал та хур хуçи турнира хутшăнмасăр юлма пултарайман. Ку хутĕнче те Тиша çĕнтерӳпе таврăннă, Чулхула облаçĕнчи хур аçине 20 минут хушшинче парăнтарма пултарнă. Каллех медаль, каллех диплом.

Çавна каласа хăвармалла. Чулхула облаçĕнче хурсен çапăçăвĕн турнирне ирттерессин йăли-йĕрки XVIII ĕмĕртенпех пырать. Кунта вăл пысăк ăмăрту шутне кĕрет. Хурсем миçе çултине кура тытăçусене тĕрлĕ номинацисенче йĕркелеççĕ. Пĕлтĕр Тиша «переходники» ушкăна (çулталăк çурăри хур аçисем) кĕрекеннисем хушшинче çĕнтерме пултарнăччĕ. Кăçал вара вăл «третьяки» е виçĕ çулхисем хушшинче тытăçнă. Кунсăр пуçне тытăçусене тăватă çулхисем тата унран аслăрах çулхи хур аçисем хушшинче те ирттереççĕ.

Çавă та интерслĕ. Радислав Потапов – ăмăртусене районтан кăна мар, Чăваш Республикинчен те хутшăнакан пĕртен-пĕр представитель. Унăн тĕллевĕ вара çакăн пек хурсем ĕрчетессине районта та анлăрах сарса ярасси, кун пек турнир-ăмăртусене район шайĕнче те, республика шайĕнче те ирттерме тытăнасси. Сăмах май, унăн шухăшне ырлакансем, тĕллевне пурнăçа кĕртме шанăç паракансем çук мар ĕнтĕ. Пĕрле тăрăшсан лав вырăнтан тапранмаллах тесе шутлать вăл.

Урăх регионта ирттерекен ăмăртăва кайса килме транспорчĕ те, укçи-тенки те кирлĕ. Кунта вара спонсорла пулăшусăр май килмест. Çавăнпа та Р.И. Потапов Б.А. Васильева, А.П. Степанова, Н.А. Васильева, В.А. Авдеева çак çул çӳреве йĕркелеме пулăшнăшăн пысăк тав сăмахĕ калать.

В. ШАПОШНИКОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: пушă вăхăтра Р.И. Потапов яланах хăйĕн хурĕсемпе пĕрле.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Çамрăксен ыйтăвĕсемпе

Ăста специалист пуласчĕ

Иртнĕ эрнере район администрацийĕн ларусен залне аслă классенче вĕренекенсем пухăнчĕç. Кашни шкултанах çамрăксем Чăваш Патшалăх ял хуçалăх академийĕнчи преподавательсемпе тата студентсемпе тĕл пулма кăмăл тунă. Залра пĕр пушă вырăн та юлмарĕ, мĕншĕн тесен вун пĕрмĕш класра вĕренекенсен экзаменсене ăнăçлă тытса малалла вĕренме каяс ыйту питĕ çивĕч тăрать. Чăваш Республикине илес пулсан та, пурĕ кунта 30 ытла аслă пĕлӳ паракан заведени шутланса тăрать. Ăçта каймалла? Малаллахи пурнăçа мĕнле профессипе çыхăнтармалла? Тата ытти нумай ыйту канăç памасть ыранхи студентсене. Паллах, ашшĕ-амăшĕсем тĕрлĕ сĕнӳ пареççĕ. Шкулти учительсен канашĕсем те вырăнлă. Район шайĕнчи пулăшу та пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине лайăх чухлаççĕ çамрăксем. Паян аслă пĕлӳллĕ, ăнăçлă, ăста специалистсем пур çĕрте те кирлĕ. Шупашкарти ял хуçалăх академийĕнче студентсене çакăн пек енсене тĕпе хурса вĕрентеççĕ. 1931 çулта йĕркеленнĕ аслă шкулăн паян та авторитечĕ пысăк. Чăваш Республикинчи нумай район пуçлăхĕ те хăй вăхăтĕнче çак вĕрентӳ заведенийĕнче ăс пухнă.

Тĕл пулăва пирĕн район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ. Кĕскен район аталанăвĕ пирки каларĕ. Патшалăх ял хуçалăх академийĕнче вĕреннĕ, халĕ ял хуçалăх отраслĕнче лайăх ĕлкĕрсе пыракансене те асăнмасăр иртмерĕ.

«Паллах, ял хуçалăхĕнче те халĕ çамрăк, çĕнĕлле шухăшлакан, тăрăшуллă специалистсем кирлĕ. Çавăнпа та алла диплом илессишĕн çеç вĕреннин усси çук. Тĕплĕн шухăшласа професси суйласа илнине нимĕн те çитмест», – терĕ Юрий Александрович.

Паян патшалăх ял хуçалăхĕн аталанăвне пысăк вырăна хурать. Çĕр ĕçченне пулăшни куç кĕрет. Тепĕр темиçе çултанах çак отрасльте чăн-чăн, ĕçе лайăх пĕлекен специалистсен хăйсене кăтартма майсем нумай пулĕç. Çавăнпа та яшсемпе хĕрсен утăма шухăшламасăр тумалла мар.

Çак шухăшсене тăсса академинчи инженери факультечĕн деканĕ Е.А. Максимов специальноçсем пирки тĕплĕн каласа пачĕ. Унта пултаруллă та хастар çамрăксем вĕренеççĕ иккен. Ăна академи çинчен кăтартнă презентацири слайдсем те çирĕплетсе пачĕç. Ял хуçалăх академийĕнче студентсене ăс пухма, хăйсене пур енĕпе аталантарма майсем нумай. Кунта çĕнĕ корпуссем йĕркеленеççĕ, машинăпа трактор паркĕ, теплица, ветеринари клиники пурри студентсене питĕ пулăшать. Лекцисенче вĕреннине йăлтах пурнăç условийĕсенче тĕрĕслеме май парать. Студентсем çуллахи вăхăтра ют çĕршывсенче те ĕçлесе унти условисемпе паллашма пултараççĕ, çав вăхăтрах ĕç укçи те илеççĕ. Ӳркенмелле мар кăна.

Ю.В. Иванщиков, инженери факультетĕнчи «Машинăсен юсавĕн тата конструкциллĕ материалсен технологийĕ» кафедрине ертсе пыраканĕ, шкул ачисене тĕрĕс çул суйласа илме сунчĕ. Аслă шкулсенчен вĕренсе тухсан Муркаш районне малалла аталантарма тăван вырăнсене таврăнни питĕ аван пулĕччĕ тесе палăртрĕ.

Районти хăш-пĕр хуçалăх ертӳçисем те çĕр çинче ĕçлекен çыннăн ӳсĕмсем тума майсем пурри çинчен каларĕç. Çулленех ял хуçалăх специалисчĕсене хапăлласа кĕтнине пĕлтерчĕç.

М. Румянцевпа А. Ванюшкина, 5-мĕш курс студенчĕсем, хăйсен тĕслĕхĕсемпе асăннă академинче ăс пухни тĕрĕс суйлав пулнине çирĕплетсе пачĕç.

Залра ларакансенчен илнĕ ыйтусем çине туллин хуравларĕç хăнасем. Хăнасем мар, юлташсем тесен те тĕрĕс. Лайăх вĕренекенсене пулăшасса шантарчĕç, вĕсене паян-ыранах малаллахи пурнăç пирки тĕплĕн шухăшлама ыйтрĕç.

Академинчи «Студентсен клубĕн» ертӳçи Г.Н. Албутова тĕл пулăва пушă алăпа килес темен. Хăйсемпе пĕрле «Каприз» ташă ушкăнне тата кĕмĕл сасăллă Алексей Петров студента илсе килнĕ. Ял хуçалăх академине талантлă çамрăксем суйласа илнине шкул ачисем хăйсемех курма пултарчĕç.

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.К. Ананьев тĕл пулăва кăмăллăн вĕçлерĕ. Пурне те тав сăмахĕсем каласа малаллахи ĕçсенче ăнăçусем сунчĕ. Пĕр-пĕрне пулăшса çанă тавăрса ĕçлемелли пирки тепĕр хут аса илтерчĕ.

Шкул ачисем вара, шухăша путнăскерсем, залран васкамасăр тухрĕç. Вĕсем паянах тĕрĕс суйлав тăвасса шанас килет.

Н. НИКОЛАЕВА.

«Суд реформи: çыннăн тата граждансен интересĕсене хӳтĕлесси»

«Ачасем савăнăç çеç кӳччĕр»

(Вĕçĕ. Пуçл. 2-мĕш стр.).

Эльза Леонидовнăна район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе лайăх амăшĕ пулнăшăн, общество ĕçне хастар хутшăннăшăн панă Тав çырăвне вулатăп.

– Çул çитмен çамрăксемпе уголовнăй ĕçсем чылай пăхса тухатăр-и? – ыйтатăп район сучĕн пуçлăхĕнчен. Пĕр хушă чĕнмерĕ, суд ларăвĕнче пăхса тухнă ĕçсем куç умне тухрĕç-ши? Унтан çапла хуравларĕ:

– Мана ачасем, çул çитмен çамрăксем саккуна пăсни хумхантарать те, кулянтарать те. Вăрласси, çаратасси, иртенçӳрене ушкăнпа тапăнасси, ирĕксĕрлесси – акă мĕнле преступлени тăваççĕ çул çитмен çамрăксем. Шел пулин те, çын вĕлерессси те тĕл пулать.

Иртнĕ çул, тĕслĕхрен, çул çитмен çамрăксем преступлени тунипе 29 уголовнăй ĕç пăхса тухнă. Çапла вара çул çитмен 32 çамрăк судпа айăпланчĕ. Кăçал та кун пек ĕçсем пулмарĕç мар. Çак таранччен çакнашкал 4 уголовнăй ĕç пăхса тухса, çул çитмен 4 çамрăка судпа айăплама тиврĕ.

Мана ытларах 10-12 çулхи ачасем право йĕркине пăсма пуçлани пăшăрхантарать. Часчасах пĕчĕк преступниксем ушкăнсене пухăнаççĕ: ытларах ниçта та вĕренмен, килтен тухса тарнă ачасем. Преступлени çулĕ çине тăнă ачасенчен чылайăшĕ хăйсен тантăшĕсенчен вĕренес енĕпе юлса пыраççĕ. Пĕр класра темиçе çул ларнă тĕслĕхсем те пур. Вĕсем нимĕнпе те интересленмеççĕ.

– Ачасем тӳрĕ çултан пăрăнни – ашшĕ-амăшĕшĕн тем пысăкăш инкек. Никама та сунас килмест кун пек шăпана.

– Апла пулин те тĕл пулаççĕ çав кун пек тĕслĕхсем. 14 çулхи ачана шкула çӳременшĕн пĕрре мар тĕрлĕрен профилактика канашĕсен ларăвĕсенче пăхса тухнă. Ку çеç те мар, иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче шкул гардеробĕнче кĕсье телефонĕ кăларса илет. Малтан та вăл обществăшăн хăрушлăх кăларса тăратакан ĕçсем тунă. Вăл икĕ хутчен ЧР Шалти ĕçсен министерствин право йĕркине пăсакан çул çитмен çамрăксене вăхăтлăх тытмалли вырăнта та пулнă, анчах тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем туман. Çул çитмен ачан амăшĕ ыйтнипе суд ăна пĕр çуллăха хупă вĕрентӳ учрежденине ямалла турĕ.

Е тепĕр тĕслĕх. 7 класс ачи пĕр ялта пурăнакансен килне веранда чӳречине çĕмĕрсе кĕрет, апат-çимĕçпе тĕрлĕ хатĕрсене пурĕ 921 тенкĕлĕх вăрласа тухать. Класс ертӳçи каланă тăрăх, вăл шкулта та ытти ачасене кӳрентерет, уроксене вĕренмест, килте ашшĕне итлемест. Суд ăна асăннă преступление тунăшăн пĕр çуллăха ирĕкрен хăтарма йышăнчĕ, тĕрĕслемелли вăхăчĕ – 1çул.

Тепĕр уголовнăй ĕç техникум студенчĕ тĕлĕшпе пăхса тухрăмăр. Çул çитмен çамрăк калаçма тесе Муркашра суйса тепĕр çамрăкран кĕсье телефонĕ ыйтса илет те каялла памасть. Тепĕр кунне 5259 тенкĕлĕх телефона Шупашкар пасарĕнче 2 пин тенкĕлле сутса ярать. Суд ăна РФ УК 159-мĕш статйин 2-мĕш пайĕнче кăтартнă преступление тунăшăн 5 пин тенкĕ штраф тӳлемелле турĕ.

Тепĕр çул çитмен, малтан та судпа айăпланнă çамрăк çынна çаратать. Суд ăна 2 çуллăха ирĕкрен хăтармалла турĕ. Тĕрĕслемелли вăхăтне 2 çула палăртрĕ.

– Мĕн калană пулăттăр каласăва пĕтĕмлетсе?

Нумай чухне ачасем право йĕркине пăсасси çемьери хирĕçӳсенчен, харкашусенчен те килет. Çемьере ача йĕркеллĕ воспитани илсе ӳсет пулсан, ашшĕ-амăшĕн ватлăхĕ те канлĕ килет. Çавăнпа та аслисен ачасемшĕн яланах ырă тĕслĕх пулса тăмалла. Вара пирĕн ачасем пире савăнăç çеç кӳрĕç.

– Тавах, Эльза Леонидовна, калаçушăн.

Л. ПАВЛОВА калаçнă.

Хурт-хăмăр ăстисем канашлаççĕ

Çулленех çурхи кунсем çитсен районти хурт-хăмăр ăстисем пĕрле пухăнса канашласси, пыл хурчĕсене сиплессипе, продукци ытларах туса илессипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явасси йăлана кĕнĕ. Хурт-хăмăр ăстисен канашлăвне кăçал апрелĕн 3-мĕшĕнче район администрацийĕн çурчĕн методика кабинетĕнче ирттерме палăртнă, 10 сехетре пуçланать. 9 сехетре вара видеофильм пăхассине йĕркелеççĕ.

Кулăш кĕтесĕ

Чăх-чĕпсем те çынсенчен кая мар

Пĕлтĕр çулла манăн Муркашра канма май килчĕ. Çавăнпа та килти чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕке сăнама вăхăт нумай пулчĕ.

Çу кунĕсем питĕ шăрăх тăчĕç, чăхсем те сулхăн шыраса кĕлет айне пытанатчĕç. Автанĕ вара, чăтăмлăскер, часчасах унтан тухатчĕ. Унăн, паллах, хăй «çемйинчи» чăхсемпе пĕрле пулмалла, анчах хĕрӳ туйăмсем ăна сулахай еннелле туртма пуçланă пулас. Кил картишĕнчи çамрăк чĕпсене пăхмасăрах вăл пускилсен килĕ умне чупсах каятчĕ. Хăйăр купи çине хăпарса тăрса çунаттисемпе çапаçапа кăшкăратчĕ. Ют чĕпĕсене хăй патне çапла йыхăратчĕ ĕнтĕ. Анчах пускил чăххисем кил картишĕнче çеç чупкалатчĕç, урама кăлармастчĕ вĕсене кил хуçи арăмĕ. Кусем те çамрăк чĕпĕсемех, анчах вĕсен автанĕ пулман. Çапла вара урама тухмалли хапхан пĕр енче чăхсем, тепĕр енче ют автан нумай вăхăт хушши кăшкăрашса каллĕ-маллĕ чупкаларĕç. Çакна сиссе тепĕр пускил автанĕ те урама «тĕрĕслеме» тухрĕ. Чĕпсен сассипе хапха патне çитсе тăчĕ. Хăй мăнаçланкаласа уткалать, пирĕн автанран аслăрах пулнине палăртас килет пулмалла. Çамрăкки вара ирĕксĕрех киле таврăнчĕ. Киле çитрĕ те – кĕлет айĕнче чăхсем çук иккен. Картишĕнчи кашни кĕтесрех шыраса çаврăнчĕ автан юлташĕсене. Вĕсем ăçта кайнине ниепле те ăнланаймасть. Кӳреннĕ чăхсем каç пуласса кĕтмесĕрех хăйсен каштисем çине ларнă. Ăçтан кĕтсе илĕн-ха çакăн пек чупкăна?

Чĕпсем вырăна ларнине курса ман аппа вите алăкне хупса хунă иккен. Автан кĕрейместь, кăшкăрать, унта-кунта чупкалать. Мăн кăмăллă чăхсем пĕр сас та кăлармаççĕ. Тертленекен автана ман арăм витене кĕртнĕ. Лешĕ вара икĕ чăх хушшине тĕккелешсех вырнаçса ларчĕ тет. Чĕпсем те ятлаçса илчĕç тет чупкăна.

Каçалапа пирĕн пата хăнасем килчĕç. Çак кулăшла ĕç çинчен вĕсене те каласа патăмăр. Автанран нумай кулчĕç вара. Виççĕмĕш сыпăкри шăллăм, шӳтлеме юратаканскер, чăтса тăраймарĕ: «Чĕпсен тĕнчинче те пирĕн пекех пурнăç иккен. Çут тĕнчере веçех пĕр шайра пулмалла ĕнтĕ. Çĕр чăмăрĕ пĕрре çеç вĕт», – тесе пĕтĕмлетӳ турĕ.

В.Н. МАСТЕРОВ,
ĕç ветеранĕ.
Свердловск облаçĕ.

Çурхи ейӳ вăхăчĕ

Сивĕ шыва лексен мĕн тумалла?

Çурхи кунсем çитрĕç. Юр хăвăрт ирĕлет. Çурхи ейӳ вăхăтĕнче çынсем сивĕ шыва лексе чирлеме, суранланма та пултараççĕ. Кун пек чухне мĕн тумалла-ха? Çакăн пирки каласа пама ыйтрăмăр район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă ларутăру енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхне Николай Панфилович МИЛЮТИНА.

Çуркунне юр хăвăрт ирĕлнĕ май таврана шыв илес хăрушлăх siksе тухать. Пысăк шыв тĕлĕнче пурăнакансен кимĕсемпе шывран тарма кирлĕ пулма пултарать. Кун пек чух çын сивĕ шыва кĕрсе ӳкме те пултарать. Пулăшу хатĕрĕсем кирлĕ вăхăтра ал айĕнче пулмасан та пултараççĕ. Çавăнпа та инкекре çыннăн хăйне хăтарма пĕлес пулать.

Çак правилăсемпе канашсене ялан асра тытăр:

1. Этемĕн 7-8 градуслă шывра 3-4 сехет таранччен пулни пурнăçпа сывлăхшăн хăрушлăх кăларса тăратмасть, 3-4 градуслă шывра – 1,5-2 сехетчен. Чи кирли – ĕненӳ.

2. Сисмен çĕртен шыва кĕрсе ӳкрĕр пулсан, мĕнрен те пулин тытма тăрăшăр, сивĕ шыва чăтма тăрăшăр. Нумай хăлаçланма кирлĕ мар, хăраса ӳкнинчен хăтăлма тăрăшăр. 30-40 çеккунт иртсен сивĕ шыва чăтма çăмăлрах пулĕ.

3. Шыва эрех ĕçнĕ хыççăн лекрĕр пулсан (хăвăра хăвăр контрольлеме пăрахман пулсан) сивĕ шыва чăтма сире çăмăлрах та пулма пултарать.

4. Аялти кĕпе-тумтире, чăлхана, перчеткепе пуçа тăхăннине ан хывăр. Ӳт-тир ăшшин 40-60 процентне пуçран «тарать», çавăнпа та пуçа тăхăнни йĕпе пулин те ăна ан хывăр. Алăпа ура пӳрнисене сивĕ пулни шывран тухсанах иртет. Ытла нумай хускану тума ан тăрăшăр, пултараймăр та, ахаль чух пултарнине кун пек лару-тăрура тăваймăр.

5. Шыва лексен лару-тăрăва хаклама пĕлĕр: сирĕншĕн шыв хĕррине ишме е кимĕрен, пăр катăкĕнчен тытăнса пулăшу кĕтме çăмăлрах-и? Шывра нумай вăхăт пулнă хыççăн кантра-пусмапа хăтăлма ан васкăр – ӳкме пултаратăр, карт! туртăнсан сыпăсен çыхăнăвне татма пултаратăр.

6. Шыв хĕрринелле ишме шутларăр пулсан карт! хусканма кирлĕ мар, тӳлек сывлама тăрăшăр, ишнĕ май ал-ура пӳрнисене массаж тăвăр. Хăвăр хăш енне ишнине курсах тăрăр, шыв хĕррине çитес çул ан вăрăмлантăр.

7. Çивĕч пăр катăкĕнчен сыхланăр. Ӳте кастарни питĕ хăрушă – сивĕ шывра юн юхма чарăнмасть, çавăнпа та этем сивĕ шывран мар, юн юхнинчен вилет.

8. Çӳхе пăр çине тухма ан шутлăр, вăл пур пĕрех ванать. Касăласран асăрханса пăра ватăр, çирĕп пăр çине тухма тăрăшăр.

9. Пăр çине тухсан тум тире хывăр, аялти тум тире лайăх пăрса илĕр, хăвăра типĕтĕр, каллех пăрса тăхăнăр. Сивĕ пăр е çĕр çинче çара уран ан тăрăр, ăшăнас тесе пĕр май хусканăр. Çывăрса ан кайăр! Чĕтреме пуçлани лайăх – эппин эсир ăшăнма пуçларăр.

10. Шывра нумай вăхăт хушши пулнă çынна пулăшатăр пулсан, ăна эрех ĕçтерме ан шутлăр – вĕлерме пулать. Хăвăртрах типĕ кĕпе-йĕм тăхăнтартăр. Ал-урине массаж тумалла.

11. Спирт таврашĕпе сătăрни пулăшу памасть.

12. Шыва сикес умĕн вăхăт пур пулсан тум тир тăхăнма тĕрĕс ĕлкĕрĕр: алăпа урана вăл пĕтĕмпех хуплатăр, çанă, шăлавар пĕççи, чăлха тавраш резинкăпа пулмалла. Пуçа çирĕп ларакан, шыв сахал çăтакан шлепке тăхăнăр. Урари пушмак çăмăллăн хывăнаканни пултăр, ăна хывнă чух чăлха ан хывăнтăр. Ĕнсене лайăх хуплăр. Паллах, хăвăрпа пĕрле улăштарма кĕпейĕм, чăлха-нуски, перчетке, пуçа тăхăнмалли, вĕри апат илме тăрăшăр.